чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

161/26567/ №

Ытлари кун, 2014, çурла (август), 19

Хакĕ ирĕклĕ

WWW.hypar.ru

Малашне те аталан, чечеклен, тĕп хуламăр!

Юрий ЕФИМОВ сăн ӳкерчĕкĕсем

Хула кунĕпе саламланă

Çурла уйăхĕн 17-мĕшĕнче, Шупашкар хулин кунĕнче, Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çемйипе пĕрле «Пултарулăх бульварĕ» арт-проектра пулнă. Çак вырăн Гагарин урамĕнчен пуçласа Хĕрлĕ тӳреме çити тăсăлнă. Интерактив лапамĕсенче 545 артистпа пултарулăх коллективĕ хăйсен ăсталăхĕпе паллаштарнă.

Ун хыççăн республика Пуçлăхĕ Чăваш Енĕн тĕп хули 545 çул тултарнине халалланă «Шупашкар – санăн çĕнтерĕвӳсен хули!» савăнăçлă уява хутшăннă. Çавăн пекех унта авиаци генерал-лейтенанчĕ, Раççей Геройĕ, Шупашкар хулин тата Чăваш Республикин Хисеплĕ гражданинĕ Николай Гаврилов мăшăрĕпе, Шупашкар тата Чăваш митрополичĕ, Шупашкар – Чăваш Епархийĕн управляющийĕ Варнава Владыка, ĕç тăвакан влаç органĕсен ертӳçисем, Шупашкар хулин ертӳлĕхĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн тата Шупашкар хула Пухăвĕн депутачĕсем, политика партийĕсемпе общество организацийĕсен представителĕсем, «Стрижи» вĕçев ушкăнĕнчи летчиксем, официаллă çынсем пулнă.

Михаил Игнатьев хула çыннисемпе хăнасене Хула кунĕпе саламланă, хăйсен хулине юратакан, ăна пĕрлехи вăйпа пушшех те илемлетекен Шупашкарсене тав тунă.

«Чăваш Ен тĕп хулипе сывлăшран та, космосран та киленме май пур, мĕншĕн тесен Шупашкар – питĕ илемлĕ хула», – тенĕ авиаци генерал-лейтенанчĕ Николай Гаврилов.

Шупашкар хулине йĕркеленĕренпе 545 çул çитнине халалланă мероприятисем çулленех тĕрлĕ девизпа иртеççĕ. Кăçал йĕркелӳçĕсем «Çамăрсем тата вĕсен психика сывлăхĕ» темăна суйланă.

Патăрьелти тĕп Вулавăшра «Паянхи яш-кĕрĕмпе хĕрупраç мĕн вулать?» курав йĕркеленĕ. Компьютер, çĕнĕ технологисен саманинче çамрăксем кĕнеке вуласшăнах тесе сăмахлатпăр пулин те чăн лару-тăру еплерехха? Телее, Юхмапа Пăла тăрăхĕнчи çамрăк ăру чун çимĕçĕнчен писмен-мĕн. Ку тăрăхри яшсемпе хĕрсем ытларах фантастикăпа фентезине кăмăллаççĕ. Вĕсен йышĕнче «Сумерки» сага пĕрремĕш вырăнта тăрать. «Гарри Поттерпа» «Властелин колец» та – юратнисен йышĕнчех. М.Булгаковăн «Мастер и Маргарита» романне ыйтакан та йышлă иккен. Вырăс классикĕсенчен çамрăксем Ф.Достоевские, Л.Толстоя, М.Шолохова вулаççĕ. Ют çĕр-шыв авторĕсенчен М. Митчелĕн «Унесенные ветром» тата Д.Сэлинджерăн «Над пропастью во ржи» кĕнекисем алăран алла куçаççĕ. Чăваш кĕнекине те айккинелле сирмеççĕ Патăрьелсем. Ангелина Павловскаян, Сергей Павловăн, Геннадий Максимовăн хайлавĕсем – чи-чи кăмăлланисем.

А.ГРОМОВА.

Дмитрий БАРЫШОВ сăн ӳкерчĕкĕ

Килĕштерсе ĕçлессине анлăлатасшăн

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Намиби Республикин Окаванго провинцийĕн тата унăн тĕп хулин Рунду делегацийĕпе тĕл пулу ирттернĕ. Хăнасем Шупашкар 545 çул тултарнин мероприятийĕсене хутшăнма килнĕ.

Республика Пуçлăхĕ хăнасене Чăваш Республикин экономика хăвачĕ çинчен пĕлтернĕ, пĕрпĕриншĕн усăллă икĕ енлĕ сыхăнусене малалла анлăлатма хатĕр пулнине каланă.

«Пĕтĕм тĕнчери лару-тăру çĕнĕ шая куçать. Пирĕн тĕллев, Африка çĕр-шывĕсемпе Раççей регионĕсен тĕллевĕ – пĕрле килĕштерсе ĕçлемелли çулсем тупасси», – палăртнă вăл.

Хăнасем професси пĕлĕвĕн, агропромышленноç комплексĕн, суту-илӳпе сывлăх сыхлавĕн тытăмĕсенче тата ытти енĕпе сыхăну тытма кăмăл пуррине пĕлтернĕ, ăшшăн та тарават йышăннăшăн тав тунă.

Ĕç мухтавĕн хули

Тĕп хулара промышленноç предприятийĕсен «Шупашкар – ĕç мухтавĕн хули» фестивалĕ иртнĕ. Пĕрремĕш фестивале хутшăннисене Хĕрлĕ лапамра М.Игнатьев саламланă.

«Шупашкар çулсеренех капăрланса, ӳссе, аталанса пырать. Хăнасем эпир еплерех илемлĕ хулара пурăннăран пире ăмсанаççĕ. Юлашки виçĕ çулта демографи тĕлĕшĕнчи лару-тăру лайăхланать, виççĕмĕш е ытларах ача çуратакансен йышĕ ӳсет – çаксем Шупашкарсем ыранхи куна шанса пурăннине çирĕплетеççĕ», – палăртнă республика Пуçлăхĕ. Фестивале хутшăннисене вăл Тав çырăвĕсем панă. Вĕсене хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов та саламланă.

Уявра хулари тĕп предприятисен ĕçченĕсем, тĕрлĕ професси çыннисем пысăк сцена çине пуçласа тухнă, хăйсен пултарулăхне кăтартнă.

● ➡ 2 стр.

КУН хыççăн КУН

56-04-26

Шăрăха пăхмасăр – рекорд!

Çанталăк кăçал типĕ тăнăран нумай хуçалăхра пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсем кĕтнĕ тухăçпа савăнтараймарĕç. Çав вăхăтрах технологие ăслăлăх вĕрентнĕ пек çирĕп пăхăнакансен вăл тĕлĕнмеллипех пысăк.

Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» колхозра 66 гектар йышăнакан лаптăкри урпа тухăçĕ 52 (!) центнера çитнĕ.

Республикăра кашни гектартан вăтамран 21 центнер тĕш тырă пухса илеççĕ, «Ленинская искра» ĕçченĕсем – 35. Хирте уй-хир карапĕсем ăмăртмалла тырă выраççĕ. Виççĕшĕн штурвалне Григорий Семеновпа Павел Никитин, Андрей Беловпа Олег Петров, Михаил Андреевпа Сергей Палейкин тытса выраççĕ. Тата иккĕшне – ашшĕсемпе ывăлĕсем. Вĕсем – Кирилловсем (Владимирпа Евгений) тата Ефимовсем (Сергейпе Егор).

Механизаторсене ĕç калăпăшне кура тӳлеççĕ. Вĕсене шалу тивĕçтерни каламасăрах паллă.

В.ВАСИЛЬЕВ.

Çамрăксем мĕн вулаççĕ?

Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен кунне халалланă мероприятисем çулленех тĕрлĕ девизпа иртеççĕ. Кăçал йĕркелӳçĕсем «Çамрăксем тата вĕсен психика сывлăхĕ» темăна суйланă.

Патăрьелти тĕп Вулавăшра «Паянхи яш-кĕрĕмпе хĕрупраç мĕн вулать?» курав йĕркеленĕ. Компьютер, çĕнĕ технологисен саманинче çамрăксем кĕнеке вуласшăнах тесе сăмахлатпăр пулин те чăн лару-тăру еплерехха? Телее, Юхмапа Пăла тăрăхĕнчи çамрăк ăру чун çимĕçĕнчен писмен-мĕн. Ку тăрăхри яшсемпе хĕрсем ытларах фантастикăпа фентезине кăмăллаççĕ. Вĕсен йышĕнче «Сумерки» сага пĕрремĕш вырăнта тăрать. «Гарри Поттерпа» «Властелин колец» та – юратнисен йышĕнчех. М.Булгаковăн «Мастер и Маргарита» романне ыйтакан та йышлă иккен. Вырăс классикĕсенчен çамрăксем Ф.Достоевские, Л.Толстоя, М.Шолохова вулаççĕ. Ют çĕр-шыв авторĕсенчен М. Митчелĕн «Унесенные ветром» тата Д.Сэлинджерăн «Над пропастью во ржи» кĕнекисем алăран алла куçаççĕ. Чăваш кĕнекине те айккинелле сирмеççĕ Патăрьелсем. Ангелина Павловскаян, Сергей Павловăн, Геннадий Максимовăн хайлавĕсем – чи-чи кăмăлланисем.

А.ГРОМОВА.

Сăрă ăстине саламланă

Сĕнтĕрвăрринчи культура çуртĕнче вырăнти художникăн Борис Пентельковăн юбилей каçĕ иртнĕ. Борис Григорьевич Сĕнтĕрвăррине 2002 çулта килнĕ. Çак тапхăрта вăл нумай-нумай картина ӳкернĕ.

Курав залне живописе хаклакан, сăрă ăстин талантне сума сăвакан ыйлăн пухăннă. Художника 70 çул тултарнă ятпа Сĕнтĕрвăрри район администрацийĕн культура тата социаллă аталану пайĕн пуçлăхĕ Э.Упракина, В.Максимов художник саламланă, пултарулăхра çĕнĕ çитĕнӳсем суннă. Н.Ерохин вара Борис Григорьевича халалланă сăввине вуласа панă. Пултарулăх каçĕнче Леонидпа Наталья Андреевсем, А.Федорова, А.Ахвердян хăйсен юрри-ташшипе савăнтарнă. Аса илтеретпĕр: Сĕнтĕрвăрринче Борис Пентельковăн куравĕ нарăс уйăхĕнченпех ĕçлет. Çак тапхăрта унăн ĕçĕсемпе ача садне çӳрекенсем, шкул ачисемпе студентсем, аслă ăру çыннисем паллашнă. Нумайăшĕ валли ӳнер пултарулăхĕ енĕпе ăсталăх сехечĕсем йĕркеленĕ. Уяв каçĕнче «Художник картинисен презентацийĕ» видео-ролика пахаланă.

Н.ВОЛЬНАЯ.

102 çулта курăк та çулать, вутă та çурать

Çак кунсенче Улатăр районĕнчи чи ватă çын, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕ, Киве Эйпеçри Виталий Никишин 102-мĕш çуралнă кунне паллă тунă. Алексей Емельяновича ачисем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсен ачисем саламланă.

Фашистсене çапса аркатнă хыççăн Никишинсен дивизине Инçет Хĕвел тухăçне куçарнă. Япония çĕнтернĕ хыççăн тин тăван яла таврăннă. Çĕнтерӳçĕ салтакăн кăкăрне виçĕ орденпа нумай медаль капăрлатнă. Алексей Емельянович чылай вăхăт ферма заведующийĕнче ĕçленĕ. Çирĕплĕхĕпе, пуçарулăхĕпе, хастарлăхĕпе палăрнă. Ĕмĕр тăршшĕпех хурт-хăмăр тытнă. Вăрăм ĕмĕрлĕ пулнин вăрттăнлăхĕ вара питĕ ансат: нихăçан та пирус туртман, эрех-сăра ĕçмен, яланах ĕçленĕ, сывă пурнăç йĕркине пăхăннă. Паян та вăл, 102 çула хыçа хăварнă пулин те, вăй-халлă, хастар, çĕкленӳллĕ кăмăллă. Ӳркенсе тăмасть – утă та çулать, вутă та çурать.

Р.АНАТОЛЬЕВА.

Çанталăк çинчен

Паян ăмăр çанталăк пулать. Çил хĕвел тухăçĕнчен 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 25, çĕрле 17 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 753 мм, сывлăшри нӳрĕк 45 процент.

Кун тăршшĕ 14 сехет те 51 минут.

Ыран улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, çумăр çума пултарать. Çил çурçĕртен 3 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 20, çĕрле 13 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 752 мм, сывлăшри нӳрĕк 83 процент.

Кун тăршшĕ 14 сехет те 46 минут.

Малашне те аталан, чечеклен, тĕп хуламăр!

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

«Чемпионсен кубокĕ» турнир иртнĕ

Çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнче Шупашкарти «Энергия» стадионта Пĕтĕм тĕнчери профессионал кĕрешӳçĕсен турнирĕ – «Чемпионсен кубокĕ» – иртнĕ.

Раççей Кикбоксинг федерацийĕн вице-президенчĕ Ришат Саяпов сумлă шоуна ирттерме пулăшнăшăн республикăпа хула ертӳлĕхне тав тунă.

Турнира хутшăннисене, куракансене Чăваш Ен Пуçлăхĕ М.Игнатьев, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов, Пĕтĕм тĕнчери Кунг-фу федерацийĕн генеральнăй секретарĕн çумĕ Наталья Матвеенко тата Чăваш Республикин кикбоксинг ассоциацийĕн президенчĕ Алексей Соловьев саламланă.

Шоу вăхăтĕнче профессионал боксерсен кĕрешĕвĕ иртнĕ. Унта Шупашкар çынни Константин Питернов çĕнтернĕ.

Ирхи зарядкăна – çăлтăрпа пĕрле

Вырсарни кун Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çемйипе «Ирхи зарядкăна – çăлтăрпа пĕрле» хавхаланса хутшăннă.

«Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Владимирович Путин пире чăннипех те шаннине кăтартрĕ – юпа уйăхĕн 9-11-мĕшĕсенче Чăваш Енре Пĕтĕм тĕнчери «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» спорт форумĕ ирттерме хушрĕ. Ку вăл пирĕн пĕрлехи çĕнтерӳ. Сире çакăнпа саламлатăп! Çынсен чĕрисем спорт урлă çывăхланаççĕ. Сывă пултăр спорт! Спорта юратакансене мухтав!» – тенĕ М.Игнатьев.

Иртнĕ ирхи зарядка Шупашкар кӳлмекĕ патне хулара пурăнакансемпе хăнасене – тĕрлĕ ӳсĕмри пин-пин çынна – пухнă. Легендăна кĕнĕ Шаолинь мăнастирĕн манахĕсем тата Намиби Республикин делегацийĕ ятарлă хăнасем пулса тăнă.

«Аквабайк – Шоуна» опытлă спортсменсем хутшăннă. Хусанти чи лайăх аквабайкерсем шыв çинче /фристайл енĕпе каскадерсем/ хăйсен ăсталăхне кăтартнă.

Унтан уява хутшăнакансем «Стрижи» вĕçев ушкăнĕн маçтăрлăхĕпе киленнĕ.

Дмитрий БАРЫШОВ сăн ӳкерчĕкĕ

Юрий ЕФИМОВ сăн ӳкерчĕкĕсем

Çĕрлехи хулапа – велосипедпа

Шăмат кун Шупашкарта «Çĕрлехи хула тăрăх» велочупу иртнĕ.

«Велосипед спортне юратакансем – йывăрлăхран хăраман çынсем. Вĕсемшĕн кирек мĕнле çанталăк та чăрмав мар. Эсир – хăюллă, паттăр, мал ĕмĕтлĕ, çирĕп кăмăллă çынсем. Сывă пурнăç йĕркине пăхăнакан çамрăксемпе мăнаçланатăп, вĕсем нимĕнле йывăрлăхран та хăрамаççĕ», – тенĕ республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев.

Велосипедçăсем каçхи 10 сехет те 30 минутра Хĕрлĕ тӳремрен старта тухнă та тĕрлĕ çутăпа йăлтăртатакан кӳлмек тавра çаврăннă.

Юррисем ăшă туйăмсем суратаççĕ

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев эстрада тата джаз юрăçипе, РФ халăх артисткипе Лариса Долинăпа тĕл пулнă.

Республика Пуçлăхĕ паллă артистка хăйĕн ăсталăхĕпе, пултарулăхĕпе совет тата Раççей эстрада аталанăвне пысăк тӳпе хывнине, нумай çул хăйĕн чун-чĕре ăшшине, вăй-халне куракансене парнеленине палăртнă. Лариса Долина юррисем çынсенче чи ăшă туйăмсем çуратаççĕ.

Юрăç Шупашкар çав тери килĕшнине, Раççей регионĕсенче юрлама кăмăлланине пĕлтернĕ.

Лариса Долина юррисене пин-пин çын итлесе савăннă, кăмăл-туйăмне çĕклентернĕ.

■ Н.ПЕТРОВА

Халăх пысăк хак панă

Çурла уйăхĕн 18-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, федераци ведомствисен территори органĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Шупашкар хулине йĕркеленĕренпе 545 çул çитнине уявлани – çакă кун йĕркине кĕртнĕ пĕрремĕш ыйту пулнă. Хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов пĕлтернĕ тăрăх – уяв мероприятийĕсене хулара пурăнакансемпе хăнасем 300 пин ытла çын хутшăннă. 6500 ача аэропортра пулнă, легендăна кĕнĕ МИГ истребительсене курнă. Раççей Сывлăш çар вăйĕсен «Стрижи» авиаци ушкăнĕн членĕсем хăйсен вĕçевĕсене шăпах çавсемпе пурнăçласçĕ.

Михаил Игнатьев уява хатĕрленсе ирттерме хутшăннисене, ăна çӳллĕ шайра йĕркеленĕшĕн, çавăн пекех уяв хыççăн хула урамĕсене тасалăхпа тивĕçтернĕшĕн тав тунă.

«Шупашкарта пурăнакансемпе тĕп хула хăнисем уявсене пысăк хак панă. Вĕсем кăсăклă та усăллă пулнă. Вĕçех кăмăллă, мирлĕ те килĕшӳллĕ лару-тăрура иртрĕ. Хула кунне уявлама килнĕ хăнасене, çав шутра «Стрижи» авиаци ушкăнĕн вĕçевçисене, Намиби Республикин Окаванго провинцийĕн делегацийĕн çыннисене, Шаолинь манахĕсене чăваш халăхĕ хăйĕн сапăрлăхĕпе, тараватлăхĕпе тытăканланă», – тенĕ республика Пуçлăхĕ.

ЧР шалти ĕçсен министрĕ Сергей Семенов палăртнă тăрăх – Хула кунне халалланă, халăх йышлăн хутшăннă мероприятисене ирттернĕ вăхăтра общество йĕркелĕхне полицин 500 сотрудникĕ сыхланă, преступленисем регистрацилемен.

Республика Пуçлăхĕ хула влаçĕсене хулан çитес çулхи çуралнă кунне тата Шупашкара йĕркеленĕренпе 550 çул çитнине уявлассине халех хатĕрленме чĕнсе каланă.

2014 çулта Чăваш Республикине газ кĕртмелли планграфика мĕнле пурнăçлани çинчен строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕ Олег Марков каласа кăтартнă. Чăваш Енĕн газ валеçмелли тытăмĕн тăршшĕ 15 пин километр ытла. Чăваш Республики Раççей Федерацийĕнче газ кĕртессине «Газпром» АУО укçи-тенкипе пурнăçлакан пилот регионсен шутне кĕнĕ. 2012-2015 çулсене Чăваш Республикине газпа тивĕçтерессине тата газ кĕртессине аталантарас енĕпе инвестици программи хатĕрленĕ. Унта 500 млн тенкĕлĕх ĕç тума пăхнă. Программăна Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар хулисен тата Шупашкар районĕн газ валеçекен тытăмĕн объекчĕсене хута ярас, Шупашкар хулин Атăл леш енчи газ валеçекен тытăмĕн объекчĕсене проектлас ĕçсене пурнăçлассине кĕртнĕ.

Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх – унччен республикăна тĕпрен илсен регион бюджечĕн шучĕпе газ кĕртнĕ, хальхи вăхăтра çак ĕç валли Газпром укçи-тенкине уйăраççĕ.

Пĕрлехи информаци ресурсĕ тата строительствăран ирĕклĕ çĕр лаптăкĕсене çавăрăнăша кĕртесси çинчен Чăваш Республикин пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ Анатолий Кузьмин пĕлтернĕ. Паянхи кун тĕлне Пĕрлехи информаци ресурсне 186 çĕр лаптăкĕ /532 гектар/ çинчен пĕлтернине вырнаçтарнă, çав шутра: пурăнмалли çурт-йĕр строительстви валли – 77 лаптăк /217 гектар/, инвестици проекчĕсем валли – 109 лаптăк /315 гектар/.

Аукционсем ирттерсе Шупашкарта индустри паркĕ тума 6 çĕр лаптăкне /5,5 гектар/ арендăна панă, Муркаш районĕнче инвестици ĕçĕ-хĕлĕ валли 1 çĕр лаптăкне сутнă. Маларах Пĕрлехи информаци ресурсне кĕртнĕ çĕр лаптăкĕсене арендăна илнĕшĕн тӳленинчен республика бюджетне çулленех 409,5 пин тенкĕ тупăш пырса кĕрет, сутнинчен – 2,026 млн тенкĕ. Вырăнти бюджетсене ку тĕлĕшпе çулленех 53,79 млн тенкĕ тата 3 млн тенкĕ пырса кĕреççĕ.

Михаил Игнатьев муниципалитет çĕрĕсемпе тухăçлăрах усă курма чĕнсе каланă.

■ В.МАРКЕЛОВ

Ыр кăмăллăх

Гуманитари пулăшăвĕн посылки – тӳлевсĕр

Чăваш Енре пурăнакансем Украинăран ирĕксĕр тухса кайма тивнипе Раççей Федерацийĕн территорийĕнче вăхăтлăх хӳтлĕх тупнă граждансем валли гуманитари пулăшăвĕн посылкине тӳлевсĕр яма пултараççĕ.

«Эпир вĕсене асаннă пулăшăвăн Белгород, Брянск, Воронеж, Курск тата Ростов облаçĕсенчи централизациленĕ пункчĕсене çитеретпĕр. Украинăран тарса килнисем вĕсенче ятарласа уçнă вырăнсенче вăхăтлăх пурăнаççĕ. Çынсене харпăр хăй гигиенин, çумалли тата дезинфекци хатĕрĕсем, вырăн таврашĕ, ал шăлли, тумтир, атă-пушмак кирлĕ», – пĕлтернĕ «Раççей почтин» Чăваш Енри филиалĕн директорĕ Владимир Тимофеев.

Кăмăл тăвакансем адресата сĕннĕ список тăрăх суйласа илме пултараççĕ. Посылкăна уçăлла йышăнаççĕ, унта мĕн пуррине операторсем тĕрĕсленĕ хыççăн тариф пуххине тӳлеттермесĕрех кăтартнă çĕре çитереççĕ. Вĕсене çак адрессемпе яма юрать:

Хĕрлĕ Хĕрес обществăн Белгородри регион уйрăмĕ: 308010, Белгород хули, Б.Хмельницкий урамĕ, 181-мĕш çурт;

«Брянск хулин Бежицки районĕнчи халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен комплекслă центр» ПБУ: 241035, Брянск хули, Октябрь 50 çул бульвар, 4-мĕш çурт;

«Воронеж хулин Тĕп районĕн халăха социаллă хӳтлĕх паракан управленийĕ» хысна учрежденийĕ: 394009, Воронеж хули, Никитская урам, 8 а çурт;

«Курск облаçĕн авари тата çăлав служби» хысна учрежденийĕ: 305040, Курск хули, Октябрь 50 çул урам, 177-мĕш çурт;

«Ростов облаçĕн граждан оборонин тата чрезвычайлă лару-тăрăвăн вĕренӳпе методика центрĕ»: 344002, Дон çинчи Ростов хули, М.Горький урамĕ, 147-мĕш çурт.

Гуманитари пулăшăвĕ çитермелли организацисен списокне анлăлатма пултараççĕ.

Аса илтеретпĕр: Раççей почти Украинăран тарса килнисене утă уйăхĕн пуçламăшĕнчех çыхăну çăмăллăхĕсемпе сервиссем йĕркелеме тытăннă. Тĕслĕхрен, йывăрлăха лекнисене пулăшас тĕллевпе унăн мĕн пур уйрăмĕнче Раççей Хĕрлĕ Хĕрес обществин адресĕпе укçа куçарăвĕсене, миграци уведомленийĕсене тӳлевсĕр йышăнаççĕ, Интернетăн пуриншĕн те юрăхлă пункчĕсемпе усă куртараççĕ.

Украинăран ирĕксĕр куçса килнисене пулăшас тĕллевлĕ граждансем хăйсен ыр кăмăллăх пулăшăвне Раççей Хĕрлĕ Хĕресĕн Мускав Банкĕнче уçнă ятарлă централизациленĕ расчет счечĕ çине çак реквизитсемпе куçармалла:

Раççей Хĕрлĕ Хĕресĕ
ИНН 7728014523
КПП 772801001
Р/с 40703810000760000170 в ОАО «Банк Москвы» г.Москва
БИК 044525219
К/с 30101810500000000219

Пĕрлехи порталпа усă кураççĕ

Патшалăх пулăшăвĕн пĕрлехи порталĕнче Чăваш Енре пурăнакансен 6,2 проценчĕ регистрациленнĕ. Ку кăтарту федерацин Атăлçи округĕнче 4-мĕш тата Раççей субъекчĕсен рейтингĕнче 35-мĕш шутланать. Пĕр уйăхра кăна вăл 0,63 процент хăпарнă /утă уйăхĕн 6-мĕшĕ тĕлне 5,57-пе танлашнă/. Çакăн пирки çурла уйăхĕн 15-мĕшĕнче Раççей Сыхăну коммуникацийĕсен министерствин патшалăх, муниципалитет пулăшăвĕсемпе тивĕçтернĕ чухне информаци технологийĕсемпе усă курас енĕпе ĕçлекен çум комиссийĕн ларăвĕнче пĕлтернĕ. Курав конференцийĕ мелĕпе иртнĕ мероприятие çĕр-шывăн мĕн пур регионĕн, çав шутра Чăваш Енĕн, представителĕсем хутшăннă.

Пĕрлехи порталта регистрациленнисен йышĕпе Приморье крайĕ /24,48 процент/, Ханты-Манси автономи округĕ /19,9/, Тюмень облаçĕ /18,69/ мала тухнă, федерацин Атăлçи округĕнче Самар /12,85 процент/, Ульяновск /10,36/, Удмурт Республики /6,28/ кăтартуллисем шутланаççĕ. Çĕр-шывра юлашки пилĕк вырăн йышăннисен шутĕнче – Чукотка автономи округĕ /2,18 процент/, Алтай /2,19/, Ингушети /1,79/, Тутар /1,77/, Кабарда Балкар /0,97/ республикисем.

Раççей Президенчĕн çу уйăхĕнчи указĕпе килĕшӳллĕн патшалăх тата муниципалитет пулăшăвне электрон мелĕпе тивĕçекен граждансен тӳпи 2018 çул тĕлне 70 процентран кая мар пулмалла. 2014 çулта асаннă кăтарту 35 процента çитмелле. Раççей Сыхăну коммуникацийĕсен министерствин кăтартăвĕсем тăрăх – халĕ пĕрлехи порталта 10,3 млн усă куракан е халăхăн 7,2 проценчĕ регистрациленнĕ.

Халăха патшалăхăн тата муниципалитетăн пулăшăвĕпе пахалăхлă тата пурте усă курма пултаракан майпа тивĕçтерес ыйтăва Чăваш Ен Пуçлăхĕ пĕрре кăна мар хускатнă. Республика Правительствин 2013 çулхи ĕçĕ-хĕлĕ пирки Патшалăх Канашĕн черетлĕ сессийĕнче пуш уйăхĕн 20-мĕшĕнче отчет тунă май Михаил Игнатьев халăха пулăшупа нумай функциллĕ центрсен тытăмĕ урлă «пĕр чӳрече» мелĕпе тата вĕсене электрон мелĕпе тивĕçтерни граждансем справкăсем илес тĕллевпе тĕрлĕ инстанци тăрăх çӳрессине, чиновниксемпе тӳрремĕнех хутшăнассине чакарнине тата коррупцие вăй илме паракан майсене пĕчĕклетнине палăртнă.

Пĕрлехи порталта паян Чăваш Республикин регионăн 69 пулăшăвне / патшалăхăн – 42, муниципалитетăн – 27/ тивĕçме пулать. Ун урлă мăшăрланăва регистрацилеме заявлени пама, ачашăн уйăхсерен тӳлекен пособие йĕркелеме, социаллă найм килĕшĕвĕпе хваттер илмешкĕн черете тăма тата ыттине тивĕçме май пур.

■ В.СМИРНОВА

Шухăш

Шупашкар – чăваш чĕри

Шупашкар – чăваш халăхĕн тăван çĕр-шывĕн тĕп хули. Эпир Аслă Раççее чунран юрататпăр. Чăваш Ене те çав туйăмпах, иксĕлми хăватпа саватпăр. Анне пĕртен-пĕрре пулнă пек, тăван çĕр-шыв та темиçе мар. Эпир тĕнчене чăваш пулса килнĕ, Шупашкар вара – чăваш чĕри. Кăçал унăн 545 çулне чысларăмăр. Тĕрĕссипе, вăл унран самай ватăрах пулни пирки иккĕленӳ çук. Тĕпчевçĕсем, историксем, археологсем палăртнă тăрăх – паянхи Шупашкар вырăнĕнче 13-14 ĕмĕрсенчех пăлхар-чăваш хулашĕ пулнă.

Хула кунне паллă тăвасси 1984 çулта пуçланнă. Хула депутачĕсен Канашĕ 1986 çулта уява пилĕк çулта пĕрре ирттерме йышăннă. Унашкал «графика» икĕ хут çеç пăхăннă. 1997 çултанпа Хула кунне çĕртме уйăхĕнчен çурла уйăхĕн виççĕмĕш вырсарни кунне куçарнă, çавăнтанпа ăна çулленех паллă тăваткăр.

Шупашкар хăйĕн çуралнă кунне çакăн пек сумлă, илемлĕ паллă тунине ас тумастăп. Хальхинче çанталăк та пулăшрĕ пулĕ. Иртен пуçласа сĕм çĕрлеччен – хула çийĕн фейерверк вун-вун тĕслĕ çутăпа ялкăшса сӳниччен – Хĕрлĕ тӳремре, тĕп урамсенче юрă-кĕвĕ, хаваслă сасă илтĕнсе тăчĕ. Кăнтăрла 13 сехетре «Стрижи» пилотаж ушкăнĕ хула çыннисемпе хăнасене ура çине тăратрĕ, Шупашкарăн тĕп лапамне йыхравларĕ, унта çитеймеллисем кам ăçта – транспортра, кĕпер çинче, транспорт кĕрлетерсе çӳрекен çул варринче... – тӳпенелле тинкерчĕç. Çапла çур сехет киленчĕç Аслă Раççейĕн мухтавĕпе.

Гагарин урамĕнчен пуçласа Ленин проспекчĕ тăршшĕпе – 2014 метр – «Пултарулăх бульварĕ» арт-проект хуçаланчĕ. Унта 500 ытла пултарулăх çынни хутшăнчĕ.

Чăваш сасси мĕнлерех янăрарĕ-ха? Хĕрлĕ тӳремри концертсенче Шупашкар çинчен çырнă илемлĕ юрăсем, чăваш композиторĕсен кĕвви-çемми Атăл тăрăх инçе-инçе сарăлчĕç. Каçхине Наци библиотеки умĕнче республикăри профессионал театрсемпе концерт учрежденийĕсем хула çыннисене хăйне евĕрлĕ парнепе – «Чăршав уçăлсан» мероприятипе – савăнтарчĕç. Унашкалли халĕччен те пулнă-ха, анчах ăна уçă вырăнта мар, пĕр-пĕр театрта йĕркелекеннчĕ. Çĕнĕлĕхĕн лайăх енĕ – театра ятарласа çӳремен халăха искусствăпа кăсăклантарма май тупни. Çитменлĕхĕ, манăн шухăшăмпа, – спектакльти сыпăксене кăтартма меллĕ марри. Çавăнпа та Хула кунĕнче концерт майĕпе ытларах усă курнăн туйăнчĕ. Çакă та питĕ аван: профессионалсем – Чăваш патшалăх симфони капеллин, Чăваш патшалăх сăнав театрĕн, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Çамăрăксен театрĕн, К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх академи драма театрĕн, Вырăс драма театрĕн, Чăваш патшалăх операпа балет театрĕн, Чăваш патшалăх филармонийĕн артисчĕсем – шăрантаракан юрăсене ытларах итлеччĕр хула çыннисемпе унăн хăнисем.

Тĕп хулари Çеçпĕл Мишши палăкĕ умне чăваш çыравçисем пуçтарăнчĕç. Кунти хăйне евĕрлĕ «Литература каçне» Чăваш халăх поэчĕ Валери Туркай ертсе пычĕ. Чăваш халăх поэчĕ Порфирий Афанасьев тата Раиса Сарпи, Лидия Филиппова, Виктор Овчаров, Любовь Федорова, Василий Кервен, ыттисем тăван хула, юрату, пурнăç çинчен çырнă сăввисене вуларĕç. Францирен чăваш чĕлхине вĕренме килнĕ Жан Батист Çеçпĕл Мишшин сăввине французла янраттарчĕ.

«Литература каçне» Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьевпа уявăн официаллă хăнисем те «кĕрсе тухрĕç». Михаил Васильевич чăваш тĕррипе ерешленĕ кĕпепе пулни пире, чăвашсене, тата та хавхалантарчĕ. Вăл писательсемпе поэтсене Хула кунĕпе, Культура çулталăкĕпе саламларĕ, çитес çул «чун инженерĕсемшĕн» тата та явăплă пулнине – Константин Иванов çулталăкĕ – аса илтерчĕ. Чăвашла, вырăсла, французла янăранă сăвăсем хыççăн республика ертӳçи те чăтса тăраймарĕ – Çеçпĕл Мишшин «Хурçă шанчăк» сăввине вуларĕ.

■ Надежда СМИРНОВА

Дмитрий БАРЫШОВ сăн ӳкерчĕкĕ

Пулăм

Çыхăну уçă, паха

Ĕлĕкхи мар халĕ: паян кирек мĕнле хулапа кăна мар, аякри çĕр-шыври çывăх çыннăмăрсемпе те самантрах çыхăнса каласа пулать. Пысăк технологисен тапхăрĕнче вăл татах лайăхланса пырĕ. Çакна «Нэт Бай Нэт Холдинг» /NETDYMET/ фиксациленĕ çыхăнăвăн операторĕ Шупашкарта çĕнĕ контакт центрĕ уçни те аван çирĕплетет. Ăна пурнăçа кĕртме 40 млн тенкĕлĕх инвестици хывнă. Асăннă центр – «Мегафон» компанийĕ. Федерацин ултă регионĕнчи уйрăм çынсемпе бизнес-пĕрлĕхе телефон тата Интернет çыхăнăвĕпе, тӳлевлĕ телекуравпа тивĕçтерет.

Оператор Чăваш Енĕн тĕп хулине ахальтен суйласа илмен. Малтан бизнес-климата, ĕç рынокне, аслă шкулсемпе колледжсене, çыхăнăвăн нумай енлĕ каналĕсене тĕплĕ тишкернĕ.

– Чылай клиент «Нэт Бай Нэт Холдинг» компанин çыхăнăвĕпе кăмăллă. Пирĕн абонент бази ӳссех пырать, ĕç-хĕл географийĕ анлăланать. Тивĕçтерĕвĕн çӳллĕ шайне упраса хăварас тĕллевпе эпир стратеги пĕлтерĕшлĕ йышăну турăмăр – Шупашкарта контакт центрĕн иккĕмĕш лапамне уçрăмăр, – терĕ компанин тĕп директорĕ Андрей Батанов. – Вăл инçĕшне пăхмасăр клиентсене 30 çеккунт хушшинче çыхăнтарма май парать. Çĕнĕ ĕç вырăнĕсем уçăласçĕ. Малтанхи икĕ эрнере кăна эпир 50 çынна ĕçе йышăнтăмăр. 2015 çулхи пĕрремĕш кварталта компанин тулли хăватпа ĕçлеме тытăнмалла, ун чухне кунта вăй хуракансен йышĕ 400 яхăн çын пулмалла.

Контакт центр талăкĕпех, канмалли кунсемсĕр ĕçлет. Уйăхра абонентсен 300 пин ыйтăвне татса парĕ.

«NETDYNET» контакт центрне уçма Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министрĕ Валентина Андреева, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов хутшăнчĕç. Михаил Васильевич центр ĕçченĕсене ӳсĕм, хастарлăх сунчĕ.

■ Ю.СТЕПАНОВ

Çĕнĕ килĕшӳсене çирĕплетĕç

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕн çумĕ Алексей Сухов ертсе пынипе «Атăл-Янцзы» форматпа ĕçлекен пĕрлехи ĕç ушкăнĕн иртнĕ ларăвĕнче Китайри партнерсемпе суту-илӳре, экономикăра тата гуманитари сферинче малашне çыхăнăва аталантарас ыйтусемпе канашлу иртнĕ.

Видеоконференци мелĕпе ĕçленĕ мероприятие хутшăннисем федерацин Атăлçи округĕнчи регионсен тата Китай Халăх Республикин Янцзы юхан шывĕн тури тата вăтам юхăмĕн ертӳлĕхĕсен «Çавра сĕтелĕн» виççĕмĕш ларăвĕн пĕтĕмлетĕвне тишкернĕ. Ун чухне регионсен хушшинчи çыхăнусен /Удмурт Республики – Хубэй провинцийĕпе, Чăваш Ен – Чунцин хулипе тата Сычуань провинцийĕпе, Оренбург облаçĕ – Чунцин хулипе, Аньхой, Сычуань провинцийĕсемпе, Самар облаçĕ – Чунцин хулипе/ килĕшĕвĕсене алă пуснă.

Ю.СТЕПНОВ.

Сервиспа меллĕ

Республикăри страховательсем «Тӳлевçĕн уйрăм пӳлĕмĕпе» пуçаруллă усă курма тытăнчĕç. Ку сервиспа ĕçпе тивĕçтерекенсен – 54, уйрăм предпринимательсен 27 проценчĕ çыхăннă.

Пенси фончĕн çакăн йышши мелĕ пурнăçа кĕнĕренпе пĕр çулталăкра, страховательсем унта 83 пин хут кĕнĕ: страховани взносĕсем шутлавĕ, пени, штраф пирки пĕлесшĕн вĕсем, РСВ-1 отчет тĕрĕс пулнине уçăмлатасшăн, палăртнă тапхăрти тӳлев реестрне тивĕçесшĕн. Сервис пулăшнипе программа тивĕçтерĕвне тата документсен бланкне илме пулать.

«Тӳлевçĕн харпăр хăй пӳлĕмĕ» сервиспа /chuvash.lkp.pfrf.ru/ çыхăнас тесен Пенси фончĕпе документсен çаврăнăшне йĕркелемешкĕн килĕшӳ тунă ĕç паракансен Интернет урлă ыйтса çырмалла. Ытти чухне Пенси фончĕн хăйсем пурăнакан вырăнти управленине заявлени памалла. Активаци кодне пенси службинче, телекоммуникаци çыхăнăвĕн каналĕпе е почта урлă саккас çырупа илме пулать.

В.ИЛЬИНА.

Çивĕч ыйту

Сĕт хакĕ хăçан тивĕçтерĕ?



Ял сынни сĕт хакĕпе миçе çул ĕнтĕ кăмăлсăр. Хушăран ăна çырлахтарнă вăхăтсем те пулнă. Виçĕм çул çуллахи уйăхсенче сутăннă кашни литр сĕтшĕн пĕрер тенкĕ хушса тăлени те. 2013-2014 çулсенчи хĕллехи тапхăрта ĕне çимĕçне йышăнакан предприятисем хака палăрмаллах хăпартни те. Вĕсем 2013 çулхи чӳк уйăхĕнчен тытăнса кăçалхи ака уйăхне çитиччен кашни килограмне 20 тенкĕрен пысăкрах хакпа туяннă. Кăрлач-пуш уйăхĕсенче вăл 21 тенкĕ урлă каçнă. Чи пысăк кăтарту – нарăсри – 21,94 тенкĕ пулнă.

Çак вăхăтра ялта ĕне тытакансем кăмăлĕ çырлахнăран лăпланнăччĕ. Анчах вăл мĕнрен килнĕ, мĕншĕн çапла пулса тухнă – ахăртнех, хресчен шухăшласа пуç ватман. «Çапла пулмалла», – тесе хĕпĕртенĕ те – лăпланнă ĕнтĕ. Çакă рынок экономикин саккунĕпе тачă çыхăннине чухламаллах. Тавар сахал чухне хак яланах ӳсет, нумай чухне – йӳнелет. Сĕтпе те çаплах пулса тухнă. Хĕлле – пысăкрах, çулла – пĕчĕкрех. Ăшăра тата сĕтеклĕ апатна ĕне сĕт ытларах антарать. Ешĕл курăкпа типĕ утта ăçтан танлаштарăн-ха? Çак вăхăтра сĕт пуçтаракан хăйне явап тыттарма пултаракан органсем сисиччен усă курса юласшăн.

Экспертсем çирĕплетнĕ тăрăх – сĕт тирпейлекен предприятисем нарăсăн иккĕмĕш çурринчен тытăнса ăна йӳнетес çул çине тăнă, ака уйăхĕнчен пуçласа хака хăвăрт чакарса пынă. Вĕсемпе пĕрлех – предпринимательсем те.

Уйрăм çын та, ял хуçалăх предприятийĕн ĕçченĕсем те ĕнесене пĕрешкелех пăхаççĕ, анчах чĕр тавара предприятие тĕрлĕ хакпа ăсатаççĕ. Хальхи вăхăтра ял хуçалăх пĕрлешĕвĕсем пĕр литр сĕте – 16-17; ял çыннисем – 11-13 тенкĕпе. Сăлтавĕ ансат: продукцие завода хăйсем тĕллĕн сутма пултарайманни. Кашни çемьерех ăна сивĕтекен оборудовани те, тирпейлекен предприятие леçме транспорт та çук. Автомашина пулсан та пĕр е 2-3, тен, ытларах ĕне сĕчĕшĕнех завода кунсерен çӳреймĕ: тăкак хушăнать, вăхăт çухалать. Çавăнпа та кашни ялтах предприниматель çирĕплетнĕ.

Усламçăн ырă шухăш-кăмăллă, пуçаруллă та пултаруллă пулмалла. Унашкаллисем çук мар-ха, анчах хăшĕ-пĕри таса мар чунлă. Хăйĕн ĕçне мар, укçана мала хурать, уншăн паян пурăнса пултăр. Ку ĕçрен кирек хăçан та пăрахса кайма пултаратăп, унччен пуйса юлас, уйрăмах çуллахи вăхăтра – ĕнесем сĕт нумайрах панă чухне.

Тĕрĕссипе, конкуренци вĕсен хушшинче те пырать. Таса мар чунлисем тӳрĕ кăмăллисене юратмаççĕ. «Сире пула хака хăпартма, 12 е 13 тенке çитерме лекет. Хамăра валли вара мĕн юлать?» – теççĕ кăмăлсăрăн.

Ыттисене хака йӳнетме сĕнеççĕ, ăна пĕр шайра тытса тăма тăрăшаççĕ. Халăхшăн мар, хăйсен кĕсйине хулăнлатассишĕн çеç ĕçлеççĕ. Тар кăлармасăрах ял çыннин вăйĕпе пуяссăн. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев усламçăсен ăна хăйсене 50-70 пусран ытла хăвармалла марри çинчен аса илтерсех тăрать. Апла тăк вĕсем Михаил Васильевич сăмахне хăлхана та чикмеççĕ. Тепринсем вара, укçашăн антăхакансем, хыснана налук пĕр пус та куçармаççĕ. Мĕншĕн вĕсенчен çирĕпрех ыйтас мар? Саккуна пăхăнманшăн штраф хурсан та ытлашши пулмĕ.

Пирĕнтен кашниех лайăхран лайăх пурăнасшăн, ырлăх курасшăн. Куншăн ырламалла çеç, анчах çын харпăр хăй вăйĕпе ĕçлесе мул пухтăр, халăх вăйĕпе усă курса мар. Çын куççулĕ çĕре ахаль ӳкмест тенине манас марччĕ.

Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Çĕмĕрле тата Етĕрне районĕсенче сĕт пуçтаракансем юлашки вăхăтра кашни литршăн 10 тенке çитиех йӳнетнĕ. Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев районсенче ял халăхĕпе тĕл пулсан: «13 тенкĕрен чакарса ан сутăр. Пĕр предприниматель вырăнне тепри тупăнатех. Хăвăра хисеплеме вĕренĕр», – тет.

Усламçăсем, паллах, çак сăмахсене илтнĕ. Анчах хытă чĕреллĕскерсем хăйсен шухăшĕнчен каялла чакасшăн мар. Утă уйăхĕнче ял çыннисенчен сĕт пухнă хак республикăра вăтамран 11 тенкĕпе танлашнă, тирпейлекен предприятисем вара 15,19 тенкĕпе туяннă. Куратăр-и, усламçăсем хăйсене кашни литртан 4,19 тенкĕ хаварнă. Хĕллехи вăхăтра сĕмсĕрленме хăяйман-ха. Тепĕр тесен, продукци сахалрах чухне нухратшăн ытлах хыпса çунман пулас. Раштавра заводсем – 20,99 /усламçăсем – 19 тенкĕпе/, кăрлачра – 21,6 /19,5/, нарăсра – 21,94 /20/, пушра 21,22 /19,5/ тенкĕпе йышăннă. Уйрăмлăх пысăках мар: раштавра – 1,99; кăрлачра – 2,1; нарăсра – 1,94; пушра – 1,72 тенкĕ /урăхла каласан, халăхпа ĕçленĕшĕн предпринимательсем уйăхсерен кашни литр сĕтшĕн хăйсене çавăн чухлĕ тенкĕ хаварнă/.

Ака уйăхĕнчен пуçласа вара хăйсене юлакан кĕмĕле пысăклатма тытăннă: продукци ытлă-çитлĕ, мĕншĕн май пур чухне нухрат туса юлас мар? Утă уйăхĕнче вăл 4,19 тенке çитни çинчен маларах çыртăм ĕнтĕ. Çав вăхăтрах Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев усламçăсен ăна хăйсене 50-70 пусран ытла хăвармалла марри çинчен аса илтерсех тăрать. Апла тăк вĕсем Михаил Васильевич сăмахне хăлхана та чикмеççĕ. Тепринсем вара, укçашăн антăхакансем, хыснана налук пĕр пус та куçармаççĕ. Мĕншĕн вĕсенчен çирĕпрех ыйтас мар? Саккуна пăхăнманшăн штраф хурсан та ытлашши пулмĕ.

Сĕт пуçтаракансен канашне йĕркелеме тахçанах вăхăт çитнĕ. Калаçса татăлса, йĕркене çирĕп пăхăнса ĕçлеччĕр. Хака сасартăк пĕчĕклетни вĕсене сиен кӳрет çеç. Çапма пĕлмен пушă хăйсене пырса ан тивтĕр.

Чи кирли – выльăх тытакана тăкаклă ĕçлеттермелле мар. Унсăрăн вăл ĕне усрама пăрахать. Кĕтӳ пĕчĕкленсе пырсан чĕр тавар тирпейлекен заводсем çурма вăйпа ĕçлеç е хупăнма та пултарĕç. Ку – ырă пулăм мар. Ял çынни ĕне хакне кăлартăр çеç мар, килти хуçалăха аталантармалăх тупăш илме пултартăр. Вăл вара выльăх йышне савăнсах хушăнтарĕ, заводсем те тулли хăватпа ĕçлĕç. Ĕç калăпăшне кура нухрачĕ те пулĕ.

Сергей Павлов вице-премьер-ял хуçалăх министрĕ çурла уйăхĕн пуçламăшĕнче республикăри сĕт пуçтаракансемпе канашлу ирттернĕ. Тимлесех йыхравланă, анчах нумайăшĕ пыман. Апла пулсан вĕсене малашне епле вăй хурасси кăсăклантармасть. Канашлăва пынисем те Сергей Владимирович сĕнĕвĕпе килĕшменнине пĕлтернĕ.

«Етĕрне районĕнчи «Сареевское» ООО ертӳçи Сергей Сапожников пĕлтернĕ тăрăх – района улттăшĕ çеç тивĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлать, ытти – вуннăшĕ – саккуна пăхăнмасть.

Чăваш Енре сĕт пуçтаракан организаци 200 яхăн. Кунсерен 400 ытла тонна чĕр тавар йышăнать. Çакă республика туса илекен сĕт калăпăшĕн 30 проценчĕпе танлашать. «Ырйту çивĕчлĕхĕ чакмасть. ЧР Правительстви саккунсăр ĕçлекенсемпе кĕрешме тĕрлĕ мера йышăнать. Тĕрĕслеве налук органĕсене, ветеринари специалисчĕсене явăçтарать. Апла пулсан та çак ĕç хальлĕхе тивĕçлĕ шайра пурнăçланаймасть-ха, яваплăхран пăрăнаксенчен çирĕпрех ыйтмалла», – тет Сергей Павлов.

Министр анчахрах çак енĕпе ларутăру еплерех йĕркеленнипе паллашма Шупашкар районĕнчи Пархикасси ялĕнче пулса курнă. Алексей Субботин предприниматель унччен халăхран сĕте 11 тенкĕпе пуçтарнă. Çав кун 12 тенкĕпе йышăнасси çинчен пĕлтернĕ. Май пур вĕт-ха, 12-пе мар, 13 тенкĕпе туянма та. Анчах мĕншĕн-ха ял хуçалăх министрĕ е республика Пуçлăхĕ çак ĕçе хутшăнасса кĕтмелле? Вĕсем пур яла та çитеймĕç.

Манăн шухăшпа, халăх сĕтне ял хуçалăх предприятийĕ урлă вырнаçтарсан аванрах. Сутаканпа туянакан хушшинче виççĕмĕш çын пулмалла мар. Хуçалăхăн план тулĕ, ял çыннин нухрачĕ ытларах пулĕ. Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» колхоз вун-вун çул каяллах çак меслетпе ĕçленине мĕншĕн мантăмăрха?

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

Ырă ĕçсем

«Тӳремре тĕл пулăпăр, çăл куç патĕнче...»

Чăваш поэзийĕн классикĕн паллă поэминчи Сетнерпе Нарспи çăл куç патĕнче курнăçаççĕ – шăпах çакăнта пĕр-пĕрне юратни пирки калаççĕ, пĕрле телейлĕ пулма ĕмĕтленеççĕ. Ним ӳстермесĕр калатăп: халĕ савнипе тĕл пулмалли çакнашкал вырăн Шупашкарта та пур. Тĕплĕ реконструкци тунă хыççăн çĕнĕ сăн илнĕ çăл куçа, Юхан шыв ĕçченĕсен тӳремĕнче вырнаçнăскере, кунта пурăнакансене тата Шупашкар хăнисене Хула кунĕ тĕлне «РусГидро» АУО тата унăн тытăмне кĕрекен Чăваш энергосбыт компанийĕ парнелерĕç.

Тунти кун ирех çума тытăннă çумăр та çăл куçа уçма пухăннă çынсен кăмăлне хуçаймарĕ. Хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов чăвашсен каларăшне те аса илтерчĕ: çумărта пуçарнă ĕç ăнăçатех. Энергетиксен пуçарăвĕ ăнăçлă пурнăçланни вара – куç кĕрет.

– 2019 çулта тĕп хуламăр 550 çул тултарнине паллă тума хатĕрленетпĕр, – палăртрĕ Леонид Ильич. – Çавна май «550 ырă ĕç» проектпа ĕçлеме пуçларăмăр. Тăван хулана юратакан, илĕртӳллĕрех тума ăнтăлакан предприятисемпе коллективсем ăна парнесем кӳреççĕ. Паянхи пулăм – çак ырă ĕçсен пуххине хывакан сумлă парне. Социаллă тĕллевсене мала хуракан компанисем, «РусГидро» тата Чăваш энергосбыт компанийĕ пеккисем, мĕн чухлĕ ытларах – пирĕн юратнă Шупашкарăмăр çавăн чухлĕ илемлĕрех те хăтлăрах пулĕ.

Ватăсем каланă тăрăх – çăл куç кунта авалах пулнă. Чĕрĕк ĕмĕр каялла ăна пăрăхпа юхмалла тунă. Шывăн пахалăхне тĕрĕслесех тăраççĕ, сывăхра пурăнакансем ăна ĕçме усă кураççĕ. Кăшарни вăхăтĕнче шыва сăваплаççĕ. Анчах кунта йăлтах тирпейлесе хăтлăх кӳме ниепле те ерçеймен. Халĕ вара пĕтĕмпех тĕплĕ тунă. Лаптăка илемлĕ брусчатка сарнă, беседка, саксем вырнаçтарнă, шыв юхакан пăрăх тухакан стенана чул çыпăçтарса илемлетнĕ. Темиçе теçетке метр тăршшĕ пусма та тунă, унăн çирĕп картлашкисем тăрăх çӳлте, сăрт çинче, вырнаçнă урамсенче пурăнакансем кунта шыв ăсма анĕç.

Пĕр сăмахпа, энергетиксем тăрăшнипе хулан тата тепĕр кĕтесĕ чăннипех хăтлăланчĕ: сулхăнра ларса канма, залив çине пăхса киленме тата, паллах, çăл куçăн сивĕ шывне астивме чĕнет. Вăл Атăл тăрăх çӳрекен, Шупашкарти юхан шыв портĕнче чарăнакан карапсен пассажирĕсене те килĕшесси иккĕлентермест. Тумтирне кура кĕтсе илеççĕ вĕт, çавна май хула пирки унăн хăнисем мĕнлерех шухăшласси çакăнтан та килет. Çăл куç вĕсен Шупашкарта пулнипе çыхăннă савăнăçне тĕревлетех. Пысăк тĕлĕнтермĕш мар-ха ĕнтĕ, çапах хула ят-сумĕшĕн – ырă тĕслĕх.

Ăна уçас кун тĕлне ятарласа Шупашкар тата Чăваш Митрополитĕнчен, Шупашкар-Чăваш епархийĕн управляющийĕнчен Варнава владыкăран шыва сăваплама пил илнĕ. Ятарлă кĕлле Шупашкарти тĕн училищин ректорĕ, Христос чĕрĕлĕвĕн чиркĕвĕн настоятелĕ Михаил атте ирттерчĕ. Вăл çăл куçсене Руçре авалтанах хисеплени-уприни çинчен аса илтерчĕ. Çынсем пăр пек сивĕ шыв тапса тăраканскерсен асамлă хăват пур тесе шухăшланă, пуç тайнă. Çавăнпа тасатсах тăнă, тирпейлĕ тытма тăрăшнă. Ку çăл куçпа юнашарах вара ĕçиччен шыва вĕретмелли пирки асăрхаттаракан табличка пур. Апла пулин те, пачăшкă каланă тăрăх, сăваплана тăк – «шыв ĕçме хăрушă мар, чĕрĕ шыв кашнинех çĕкленӳ, чун тата кĕлетке хăватне кӳрĕ».

Çывăхри объектри строительсен ушкăнĕ çак сăмахсен чăнлăхне самантрах çирĕплетрĕ теме те юрать – шыва темиçе пластик савăта тултарчĕç. Тепĕр тесен кунтан час-часах шыв ăсаççĕ-мĕн: «Вăл тутлă – хваттерти кранран юхаканнипе танлаштарăмăн». Ку вĕсен шухăшĕ кăна мар иккен. Пуçласа активнĕ май хăйĕн дегустаци кăтартăвне хула пуçлăхĕ те çийĕнчех пĕлтерчĕ: «Чăннипех питĕ тутлă! Кашни кун кунтан шыв тултарса ĕçе илсе кайăп».

«Текстильщик» МКРта пурăнакан ватăсем те хăйсен савăнăçне пытармаççĕ. Злата Федотова авă тĕлĕнсе пĕтерейместь: хăçантанпа тимлĕх пысăк пулман темелле, халь вара тавралăх самантрах çĕнелсе улшăнчĕ! Микрорайонăн ветерансен канашĕн председателĕ Геннадий Кузнецов та, кунта хул ай туйи çине тĕревленсе утса килнĕскер, шӳтлет: «Пачăшкă сăвапланă шыв сиплĕ терĕ. Унпа çусан ура ыратни тӳрех иртсе каймĕ-ши?» Пĕлсе пĕтер – асамли пулчĕ-çке, кĕлĕ хыççăн тепĕр самантранах çумăр чарăнчĕ те хĕвел тухрĕ...

Юлашкинчен çакна каласшăн: хула влаçĕсем ытти çăл куçа та тирпейлес тĕллевлĕ – вĕсем Шупашкарта теçетке ытла. Энергетиксем çак ĕçре пулăшма хатĕр.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

Константин АФАНАСЬЕВ, «ЧЭСК» АУОн ĕç тăвакан директорĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан: **Пирĕн филиалсем пĕтĕм Чăваш Енре ĕçлеççĕ, çавăнпа та эпир республикăри ытти хулапа районти çăл куçсене те тирпейлеме пулăшассшăн. Юлашки çулсенче «РусГидро» экологи акцийĕсем тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕ, вĕсем пĕтĕм Раççейпе иртеççĕ, çав шутра – Чăваш Енре те. Ку акцисем – Атăла пулă яни /пĕлтĕр тата кăçал 15-шер пин вĕтĕ çтерлĕк янă/, Шупашкарти Атăлçи бульварĕнче Энергетиксен аллейине уçни тата ытти те. Çăл куçсене тирпейлени çут çанталăка упрас, унăн пуянлăхне ӳстерсе пырас тĕллевлĕ пулăмсен лайăх тăсăмĕ тесе шухăшлатăп. Çакна уйрăммăн палăртасшăн: çак акцисене ирттерме каякан тăкаксем электроэнерги тарифĕсене пачах та витĕм кӳмеççĕ, экологи программине пурнăçламалли укçа-тенке «РусГидро» хăйĕн усламĕнчен уйăрать.**

Украинăран тарса килнисем валли – ваканси ярмăркки

Госслужба занятости Чувашии

Çурла уйăхĕн 14-мĕшĕнче «Чувашиякурорт» санаторин конференц-залĕнче Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби Шупашкар хулинчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрпа пĕрле Украина территорийĕнчен ирĕксĕр тухса кайма тивнĕ тата пурăнмашкăн санаторие вăхăтлăх вырнаçтарнă граждансене ĕçпе тивĕçтерес тĕллевпе ваканси ярмăркки йĕркеленĕ.

● ***Ваканси ярмăркки тивĕçлĕ ĕç тупма шанăç парать.***

Раççей Федерацийĕн чылай регионĕ пекех Чăваш Республики те хăйсем ялан пурăннă çĕртен – Украинăн кăнтăр-хĕвел тухăçĕнчен – çитнисене пулăшу парать. Тарса килнисем федераци бюджетĕнчен вăхăтлăх усрамашкăн уйăрнă укçа-тенкĕ тата гуманитари пулăшăвĕ шучĕпе пурăнаççĕ. Килтен васкавлăн пăрахса кайнă май вĕсем çул çине илнĕ нухрат шутлă кăна юлнă, çавăнпа та ваканси ярмăркки – хăйсен çемйине тăрантарса усрамашкăн тата Раççее юрăхлă пулмашкăн тивĕçлĕ ĕç тупма май паракан пысăк шанăç.

«Чăлхапа трикотаж фабрики», «Яхтинг» атă-пушмак фабрики» ОООсем, «Чăвашавтотранс» ПУПăн филиалĕ – Шупашкарти тата Çĕнĕ Шупашкарти пассажирсен автотранспорт предприятийĕн организацийĕсем – тĕрлĕ вакансисĕнне: инженер-технолог, çĕвĕç, çĕвĕ оборудованийĕн операторĕ, модельер, транспортировщик, технолог, производство мастерĕ, кондуктор, автобус водителĕ, электрогазосварщик, слесарь-юсавçă тата ытти – 37 профессине специальноç тăрăх пĕтĕмпе 413 пушă вырăн тата должноç. Сĕнекен вакансисем тăрăх тӳлекен шалу 15 пин тенкĕрен иртет.

Ĕç паракансем ирĕксĕр куçса килнĕ граждансемпе кăмăллăн хутшăннă, вĕсене организацири ĕç условийĕсемпе паллаштарнă.

– Пирĕн предприяти – пысăккисенчен пĕри, пулăшу рынокĕнче чылайранпа ĕçлет, – палăртнă Шупашкарти чăлхапа трикотаж фабрикин кадр пайĕн ертӳçи Елена Янеева. – Хĕрарăмсене эпир çĕвĕç вакансине сĕнетпĕр. Ку профессипе хăнăху тата опыт çуккисем вырăнтах вĕренме, ун хыççăн ĕçе вырнаçма пултараççĕ. Арçынсем валли пичет оборудованийĕн операторĕн вакансийĕ пур. Специалистсем те кирлĕ: инженер-технолог, дизайнер, модельер-конструктор. Эпир социаллă тулли пакетпа, апатлану дотацийĕпе, общество транспорчĕпе ĕç вырăнне çӳренин тӳлевĕпе тивĕçтеретпĕр. Украина гражданĕсем валли çавăн пекех пурăнмалли вырăн уйăратпăр. Пирĕн предприятире çемйипе ĕçлекенсем те пур. Коллектив ăш пиллĕ. Украинăран килнĕ çĕнĕ ĕçченсене хăпăлласах йышăнатпăр.

Ваканси ярмăркки 43 çын хутшăннă. Тĕпрен илсен вĕсем – Донецк тата Луганск облаçĕсенчен килнисем. Чылайăшĕн Чăваш Енре тăван çук. Донецкра пурăннă Роман Копылов хăйĕн специальноçĕпе /вăл – инженер-технолог/ вырнаçасшăн пулнă.

– Юрăхлă ĕç тупиччен «Яхтинг» ОООра лини операторĕнче тăрăшас терĕм. Мĕн чухлĕ ĕçленине кура тӳлекен график тата шалу 15-30 пин тенкĕ пулни интереслентерчĕ. Донецкрипе танлаштарсан сирĕн патăрта ĕç укçи пысăк, – палăртнă Роман.

Ярмăркка пирки пĕлтерсен Наталья унта тулли кăмăлпа çул тытнă. Вăл ĕнентернĕ тăрăх – халĕччен повар та, доярка та, хуралçă та пулнă. Паян вăл кирек хăш ĕçе каймашкăн хатĕр, çапах та ăна «Шупашкарти чăлхапа трикотаж фабрики» ОООри çĕвĕç вакансийĕ ытларах килĕшнĕ.

– Хăнăху çук паллах, анчах вĕрентме шантарчĕç тата пурăнмалли вырăн пулать терĕç, – кăмăллăн пĕлтернĕ хĕрарăм.

Мероприятие хутшăннă 13 гражданин – «Яхтинг» ОООна, 2-ĕн – «Шупашкарти чăлхапа трикотаж фабрики» ОООна, 5-ĕн Шупашкарти тата Çĕнĕ Шупашкарти пассажирсен автотранспорт предприятийĕсене каймашкăн направлени илнĕ.

Украинăран ирĕксĕр тухса кайма тивнисем валли «Контур» хăна çурчĕн комплексĕнче, «Чувашиякурорт» санаторире тата Хевтесĕр ачасемпе çул çитмен çамрăксен реабилитаци центрĕнче уçнă вăхăтлăх пурăнмалли пунктсенче консультаци пункчĕсем ĕçлеççĕ. Шупашкар хулинчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр специалисчĕсем вĕсенче ĕçлев ыйтăвĕсемпе пулăшаççĕ: республикăри тата хулари рыноксенчи лару-тăрупа информаци параççĕ, ваканси банкĕпе паллаштараççĕ, професси тĕлĕшĕнчен тестсем ирттереççĕ.

Кĕске справка. Украина территорийĕнчен тухса кайма тивнĕ граждансенчен 46-шĕ республикăри ĕçлев службин органĕсем пулăшнипе 2014 çулхи çурла уйăхĕн 18-мĕшĕ тĕлне вырăн тупнă.

Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби.

Брифинг

Килтен тухмасăр, меллĕ, хăвăрт

«Интернетпа çыхăнма пултаракан кирек хăш гражданин та вăхăта ытлашши çухатмасăр тата пысăк пахалăхпа патшалăхăн пулăшу ĕçĕсемпе туллин усă курма пултарать. www.gosuslugi.ru сайтра пĕр хутчен регистрациленсен портал сĕнекен мĕн пур пулăшăва, çав шутра РФ ШЕМĕнне те, туллин илме пулать. Килтен тухмасăр, меллĕ, хăвăрт», – терĕ патшалăх пулăшăвне электрон мелпе тивĕçтернине сăнаса тăракан ĕç ушкăнĕн ертӳçи, Чăваш Республикинчи ШЕМ штаб пуçлăхĕн çумĕ Андрей Кушников брифинга пĕтĕмлетнĕ май.

Чăваш Енри Шалти ĕçсен министерстви электрон мелпе патшалăхăн темиçе енлĕ пулăшăвĕпе тивĕçтерет. Кăçалхи çичĕ уйăхра вăл е ку ыйтупа виç çĕр пин ытла заявлени йышăннă. Вĕсенчен 3029-шĕ электрон мелпе килнĕ. Иккĕмĕш меслетпе усă куракан сахаллине, анчах вăл çынсемшĕн меллĕрех пулнине палăртрĕ Андрей Николаевич: «ШЕМ сайтĕнчи ятарлă уйрăмра заявлени хучĕн, укçа тӳлемелли квитанцисем тĕслĕхĕсем те пур. Мĕнле документсем кирлине те пĕлтернĕ. Ыйтăва, сканерланă документсене электрон почтăпа ăсататăр. Заявленисене саккунпа палăртнă вăхăтра пăхса тухаççĕ. Çакăн пек меслетпех ыйтни хатĕррине пĕлтерсе сирĕн пата хурав килет».

Çын килтен тухмасăрах патшалăхăн пулăшăвĕпе усă курма пултарни чылай чăрмава сирет. Тĕслĕхрен, вăл е ку чиновник патне темиçе хут каймастăн, пӳлĕмĕн алăкĕ умĕнче черет кĕтсе вăхăта ирттерместĕн. Ун патне хатĕр хутсене илме çеç пыратăн. Полици ĕçченĕсем каланă тăрăх – çапла майпа коррупци çулне те пӳлме май килет. Электрон мел тата ытти нумай çăмăллăх парать.

РФ ШЕМ ÇÇХПИ Чăваш Енри управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Геннадий Чурбанов палăртнă тăрăх – инспекцин республикăри подразделенийĕсем электрон мелпе патшалăхăн виçĕ тĕрлĕ пулăшăвĕпе тивĕçтереççĕ. Вĕсем: автомототранспортсемпе прицепсене регистрацилени, пулас водительсене экзамен тыттарни тата удостоверени, административлă майпа йĕрке пăсни çинчен информаци пани.

Дежурнăй чаççемпе те электрон майпа çыхăну йĕркелеме пулать. Хуласемпе районсенчи уйрăмсем çапла майпа преступленисем, йĕркене пăсни, саккуна пăхăнманни çинчен пĕлтернисене йышăнаççĕ. «2011 çулхи авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче граждансен электрон ыйтăвĕсене пăхса тухса ĕçе кĕртекен «Раççей Федерацийĕн право хуралĕн порталĕ» информаци тытăмĕ вăя кĕчĕ, – терĕ Чăваш Ен ШЕМĕн оперативлă уйрăм пуçлăхĕ Анатолий Кондратьев. – Дежурнăй чаçсен сотрудникĕсен ĕç вырăнĕсене автоматизациленĕ. Вĕсем патшалăх пулăшăвĕн пĕрлехи порталĕнчен килекен граждансен ыйтăвĕсемпе ĕçлекен системăпа тӳрех çыхăнма пултараççĕ».

Çын судпа айăпланнине е айăпланманнине те Интернет урлă ыйтса пĕлме пулать. «Справкăна ШЕМĕн информаци центрĕ е гражданин пурăнакан вырăнти территори органĕ парать, – пĕлтерчĕ информаци центрĕн пуçлăхĕ Николай Гусев. – Паспорт тата унăн копийĕ кирлĕ. Ĕçе тӳлевсĕр, 30 кун хушшинче пурнăçлаççĕ». Чăваш Республикинчи ШЕМĕн информаци центрĕ çавăн пекех архив, политика репрессийĕсене лекнисен тĕлĕшпе справкăсем парать, апостиль лартать /саккун умĕнче явап тытнине е саккунпа урлă пулманнине çирĕплетекен пичет, вăл чикĕ леш енне каякансене е унтах тĕпленме хатĕрленекенсене кирлĕ/.

Николай Геннадьевич халăхра анлă сарăлман тепĕр ĕç çинче тĕплĕнрех чарăнса тăчĕ. Вăл – патшалăх дактилоскопи регистрацийĕ. Федерацин 2008 çулхи утă уйăхĕн 25-мĕшĕнчи саккунĕпе килĕшӳллĕн Раççей гражданĕсем хăйсен ирĕкĕпе РФ ШЕМĕн район шайĕнчи территори органĕсенче пĕрне йĕррисене хăварма пултараççĕ. «Çак информацине чи малтан çухалнă çынна шыранă чухне усă кураççĕ, – ăнлантарчĕ информаци центрĕн пуçлăхĕ. – Дактилоскопи регистрацийĕ уйрăмах тăн çухатакан граждансемшĕн кирлĕ япала. Тепĕр чухне ватăсем килтен тухса каяççĕ, каялла таврăнмалли çула ас тумаççĕ, хăйсем пирки те каласа кăтартма пултараймаççĕ. Пӳрне йĕррисем çухалнă çынна шыраса тупма пулăшаççĕ».

Патшалăх пулăшăвне электрон мелпе тивĕçтересси вăй илсе кăна пырать-ха. Çавна май йывăрлăх сахал маррине палăртрĕç йĕрке хуралçисем. Техника ыйтăвĕ уйрăмах çивĕч. Территори органĕсенче тивĕçлĕ оборудовани çитмест. Кунсăр пуçне аслă ӳсĕмри çынсене хальхи йышши компьютер техникине алла илме пĕрре те çăмăл мар. Вăл е ку ыйтăва хатĕрлесе электрон почтăпа ăсатасси те кăткăс. Çавна май полицин районсенчи уйрăмĕсенче граждансене ку енĕпе май килнĕ таран пулăшма яланах хатĕррине палăртрĕç полици ĕçченĕсем.

Чăваш Республикинчи ШЕМ тивĕçтерекен патшалăх пулăшăвĕсем пирки тĕплĕнрех министерствăн сайтĕнче /www21.mvd.ru/ вуласа пĕлме пулать.

■ **В.БАГАДЕРОВА**

Истори

Аккерман крепоçĕ

Эпĕ Белгород-Днестровский хулинчи Аккерман крепоçне çитсе куртăм. Тĕлĕнмелли мĕн чухлĕ кунта!

2500 çул хушшинче Белгород-Днестровский хули темĕн те чăтса ирттернĕ. Унăн ячĕ темиçе хут та улшăннă. Историйĕ пирĕн эрăччен VI ĕмĕр вĕçĕнче пуçланать. Милета хулин çыннисем Днестр шывĕн хĕвел анăç енче Офиссу-Тиру хулине никĕсленĕ. Çак хулан ванчăкĕсем – хальхи Белгород-Днестровскин историпе культура вырăнĕсем.

Тиру вырăнне чи малтан 1900 çулта чавса тĕпчеме тытăннă. Кунта пурăнмалли çуртсем, хĕтĕленмелли сооруженисем, тăмран, тимĕртен тунă япаласем, укçа тупнă. Çакăнтан Тиру хули суту-илăпе çĕрекенсен çулĕ çинче ларни паллă пулнă. Хулана гет, гон, гунн çарĕсем тапăнни паллă. Пирĕн эрăччен I ĕмĕрте хула Рим империне кĕнĕ, ăна Алба-Юлия тенĕ. Славянсем – Турис, уличсемпе тиверсем Белгород тенĕ. XII ĕмĕрте Белгород Галицк-Волынск княжествине кĕнĕ. 1214 çулта Венгри королевствин йышăнăвĕпе хула Фагер-Вар-Половцы ят илет, Итали халăхĕ ăна – Монкастро, грексем – Аспро-Кастро, арабсем – Акджа-Кермен, нимĕçсем Вайсенберг тенĕ. XIV ĕмĕр вĕçĕнче 20 пин çынлă хула Молдави патшалăхне кĕрсе Четая-Абэх ят илнĕ. Вăл кăнтăр провинцийĕсен тĕп хули тата тĕп порчĕ пулса тăнă.

Çак тĕлелле вăтам ĕмĕрĕн зодчествин мăнаçлă крепоçне туса пĕтернĕ. Ăна 200 çула яхăн çĕкленĕ. Крепоç туллă-сăртлă çĕрте Днестр шывĕ хĕрринче 9 гектар йышăнать. Стенасен тăршшĕ – 2,5 сухрăм, çуллĕшĕ – 5 метртан тытăнса 15 метра çитет, хулăнăшĕ – 1,5-5 метр. Крепоçăн çурçĕр енче – Днепр шывĕ, виçĕ енче – тарăн çырма. Малтанласа ăна шывпа тултарнă, вăл 20 метр тарăнăш, 14 метр сарлакăш пулнă. Крепоçра çуллĕшпе те, сарлакăшпе те, пĕлтерĕшпе те расна 34 башня, вĕсенчен 12-шĕнче хуралçăсене пурăнма тата халăх тыррине усрама пĕлĕмсем тунă. Хăш-пĕр башньăн ячĕ пур: Овидий, Пушкин, Темница, Комендант тата Сокровищница.

Хула енчен кĕмелли тĕп хапхана Килийские теççĕ. Тахçан кунта çĕклене-кен кĕпер, икĕ хапха, икĕ шĕвĕр решетке, иккĕмĕш ярăмра – вĕри шыв тата вĕри сăмала сапмалли шăтăк пулнă. Крепоçа тăватă картише пайланă. Вĕсен тĕп тивĕçĕ – хула халăхне тăшмансенчен хŷтĕлесси.

Крепоç ăшĕнчи чи авалхи, чи асамли – Цитадель. Вăл мĕн пур енчен хŷтĕленме пултарнă. Унта тапăнса кĕме май пулман. Крепоç айĕнче вăрттăн çулсем, пытанмалли вырăнсем пур. Вĕсене паян кун та йăлтах тĕпчесе пĕтереймен-ха.

XV ĕмĕрте Оттоман империйĕ хулана тата крепоçа çавăрса илме темиçе хут та хăтланса пăхнă. Чи хаяр çапăçусем 1484 çулта пулса иртнĕ. Турци султанĕ II Баязит 300 пинлĕ çарĕпе, Крым ханĕ Менгли-Гирей 50 пинлĕ çарĕпе тата 100 çар карапĕ çыран енчен те, шыв енчен те тапăнса килнĕ. Крепоçăн хирĕç тăма вăйĕ çитеймен, тăшмана парăннă. Çапла 328 çул унта туркăсен патшалăхĕ хуçаланнă. Вăл Аккерман /Шурă чул/ ят илнĕ. Аккерман крепоçне туртса илес текен тата та пулнă. Е.Дашкевич, И.Покотило, Г.Лобода, С.Наливко, Сулима атамансем, И.Серко, С.Пали полковник ертсе пынипе XVI-XVII ĕмĕрсенче Украина казакĕсем тапăннă.

1770 çулта И.Игельстрем генерал ертсе пынипе Раççей çарĕсем те тапăнса пăхнă. 10 кун пынă çапăçусем хыççăн хулан пĕр пайĕ Раççей аллине куçнă. 1789 çулта крепоçе Г.Потемкин, Ф.Ушаков ертсе пынă Хура тинĕс флочĕн тата М.Кутузов, М.Платов çарĕсем штурмланă. 1806 çулта Аккерман А.Ришелье герцог аллине куçнă. 1812 çулта тин Бухарестăн мирлĕ килĕшĕвĕпе Прут тата Днестр хушшинчи çĕрсене Раççей Империне панă. 1832 çулта крепоç çар-хŷтĕлев сооруженийĕн тивĕçĕсене пурнăçлама пăрахнă. 1896 çулта историпе архитектура палăкĕ туса хунă.

1821 çулта хулана ссылкăна ăсатнă Пушкин пырса курнă, 1825 çулта – А.Мицкевич. Л.Украинка хăй кунта пулни çинчен «Подорож до моря» сăввинче, А.Горький «Старуха Изергиль» калавĕнче çырса кăтартнă.

1918-1940 çулсенче Аккерман Румыни королевствине кĕнĕ. 1941-1944 çулсенче нимĕç фашисчĕсен аллинче пулнă. 1944 çулхи çурла уйăхĕн 9-мĕшĕнче тин хула Белгород-Днестровский ят илнĕ.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнчен тытăнса кунта реставраци ĕçĕсем пыраççĕ, Белгород-Днестровский крепоçа архитектура палăкĕ пек сыхлаççĕ.

Крепоç çул çŷревçĕсемпе тавра пĕлŷçĕсемшĕн çеç мар, кино ŷкерекенсемшĕн те юратнă вырăн. Крепоçра «Отелло», «Корабли штурмуют бастионы», «Адмирал Ушаков», «Дорогой ценой», «Чертова дюжина», «Белеет парус одинокий», «Капитан Немо», «Рыцарский замок», «Юность Петра», «20 лет спустя», «Исцеление любовью», «Обреченная стать звездой» кинофильмсене ŷкернĕ.

■ **Николай КИРЮШИН,**
тавра пĕлŷçĕ

Чыслав

Айхи ячĕ манăçмĕ

Çурла уйăхĕн 21-мĕшĕнче чăваш халăхĕн сумлă ывăлĕ, тĕнче поэзийĕн мухтавĕ пулса тăнă Геннадий Айхи çуралнăранпа 80 çул çитет.

Юбилей мероприятийĕсем çулталăк пуçламăшĕнчех пуçланнă. Сăмахран, нарăсăн 19-28-мĕшĕсенче Наци библиотекинче Геннадий Айхин асăну каçĕсем, «Геннадий Айхин литература картти» курав, çавăн пекех шкул ачисемпе студентсем валли информаци сехечĕсем иртрĕç. Кăçалхи пуш уйăхĕн 29-30-мĕшĕсенче «ГолосА» поэзи фестивалĕ асăннă вулавăша юратнă поэтăн пултарулăхне кăмăллакансене пуçтарчĕ.

Çурла уйăхĕн 22-мĕшĕнче Чăваш нации музейĕ пурне те «Айхин литература çул çŷревне» йыхравлать.

Паллă литератор ячĕпе «Г.Айхин ŷнер тĕнчин хăй евĕрлĕхĕ» Пĕтĕм тĕнчери ăслăлăх практика конференцийĕ йĕркеленме палăртнă. Вăл И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче авăнăн 10-мĕшĕнче иртĕ. Çав кун Наци библиотеки «Г.Айхин нихçан сŷнми çути» куравпа паллашарĕ.

Геннадий Айхи фончĕ /ăна Атнер Хусанкайпа Ева Лисина йĕркеленĕ/ «Пурнăç – Кĕнеке» проекта пурнăçа кĕртсе юпа уйăхĕн 19-мĕшĕнче семинар-практикум ирттересшĕн. Çавăн пекех Геннадий Айхин 13 чĕлхепе пичетленнĕ «Мир Сильвии» кĕнекин презентацийĕ пулĕ, Анастасия Новикова художник куравĕ уçалĕ. Юпа уйăхĕн 21-мĕшĕнче поэтăн тăван ялĕнчи масарĕнчи вил тăприйĕ çине çитсе килме палăртаççĕ.

Кăçалхи авăн-раштав уйăхĕсенче Наци библиотекин сайтĕнче «Геннадий Айхин литература картти» виртуаллă куравпа паллашма пулать.

■ **Надежда ГЕОРГИЕВА**

Меллĕ, перекетлĕ, анчах хăрушă

Утă уйăхĕнче скутерсем, мопедсемпе мотоциклсем аварие лекнĕ тĕслĕх питĕ нумай пулчĕ.

29-мĕшĕнче Çĕнĕ Шупашкар хулин 17 çулти çамрăк умра пыракан транспорт патне сывăха пыма юраманнине пĕлсе тăрсах йĕркене пăснăран "УАЗ" автомобильпе çапăннă. Шупашкарти Эгер бульварĕнче "Рено" водителĕ 14 çулти ача тытса пыракан мопед çине пырса кĕнĕ. Çамрăксен халĕ иккĕшĕн те травматологи клиникинче сипленме тивет.

ШĔМ ÇÇХПИ Чăваш Республикинчи управленийĕн пресс-службин пĕлтернĕ тăрăх – утă уйăхĕнче мототранспорт хутшăннипе 37 авари пулнă, 4 çын вилнĕ, 36-шĕ аманнă. Иртнĕ çур çулта икĕ урапаллă техника водителĕсен айăпĕпе çул çинче 74 инкек пулнă, çичĕ çыннăн пурнăçĕ татăлнă. Сăлтавĕ – мотоциклсемпе скутерсен хуçисем хăвăртлăх режимне, çул-йĕр правилисене пăхăнманни, хăрушсăрлăх нормисене хисеплеменни. Çавăнпах шута илнĕ аварисен 70 проценчĕ вĕсен айăпĕпе пулать.

Мототранспорт инкекĕсен статистики сисчĕвлентерет: чылай чухне çамрăксем вилеççĕ, сусăрланаççĕ. Апла пулин те çил кăларса çŷреме юратакансен йышĕ ŷссех пырать. Чăваш Енре хальхи вăхăтра ултă пин çурă ытла мототранспорта шута илнĕ. Çурла уйăхĕнче полицейскисем вĕсен хуçисемпе профилактика мероприятийĕсем ирттерме палăртаççĕ.

■ **Леонид НИКИТИН**

Тулли кăмăлпа таврăнчĕ

«Тăвансем, эсир пирĕн пата ăмма пымастăр?
Хурĕ сăхать тетр-и мĕн?
Эсир пирĕн пата пынă çĕре
Хурĕ пулĕ хуплура», –

çапла юрласа тухрĕ Куславкка районĕнчи Хурамалти «Эткер» халăх фольклор ушкăнĕ XI «Руç юрăçисем, Руç ăстисем» фестивале уçнă чухне.

Фестиваль Воронеж облаçĕнчи Воробьевка районĕнче çурла уйăхĕн 1-3-мĕшĕсенче иртрĕ. Унта Раççейĕн тĕрлĕ кĕтесĕнчен, ют çĕршывран килнĕ фольклор ушкăнĕсем тата ал ĕç ăстисем хутшăнчĕç. Виçĕ кун хушшинче пĕр-пĕрин культурипе, йăли-йĕркипе паллашрĕç.

«Эткер» фольклор ушкăнĕ /ертŷçи – РФ культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Л.Ефимова/ ку мероприятире – виççĕмĕш хут. Вĕсене Воронеж çĕрĕ çинче тахçанхи пĕлĕшсен вырăнне хурса хапăл туса кĕтсе илчĕç. «Эткер» икĕ ялта концерт лартрĕ, куракансене чăваш халăх юрри-ташшипе савăнтарчĕ, мăн асаттесен ырă йăлине тĕпе хурса кăпăклă сăрапа хăналарĕ.

Уява çурла уйăхĕн 1-мĕшĕнче пĕве хĕрринчи лапамра уçрĕç. Артистсем шывра ишекен сулă çинче ташларĕç, юрларĕç. Çав тери нумай куракан пуçтарăннă. Ал ĕç ăстисем пултарулăхĕпе тĕлĕнтерчĕç, тĕрлĕ япала ăсталама хăнăхтарчĕç. Пирĕн ушкăнри ачасем те тăмран шăхлич, пусмаран Мулкач пŷрнескететте тума вĕренчĕç. Пушă вăхăтра пурте пĕвере шыва кĕрсе уçалчĕç, хĕвел çинче хĕртĕнчĕç.

Тăван ене «Эткер» дипломпа, асăнмалăх парнесемпе тата тулли кăмăлпа таврăнчĕ.

■ **Валентина ЕФИМОВА**

Яваплăх

Каллех – çĕршĕн

Большевиксем влаçа килнĕ хыççăн чи малтан алă пуснисен шутĕнче çĕр çинчен калакан декрет пулни ăнсăртран мар – çĕр пĕлтерĕшне ăнланнă. Хальхи пуçлăхсем те çĕре питĕ хакласçĕ – миçемĕш çын ĕнтĕ çĕрпе çыхăннă уллавшăн суд умне тăрать.

Черетлĕ тĕслĕх – Çĕмĕрле хула администрацийĕн пуçлăхĕ пулнă Андрей Броницын тĕлĕпше пуçарнă уголовлă ĕç. Çĕмĕрле прокуратури тĕрĕслев ирттернĕ май вăл пĕр хĕрарăма патшалăх харпăрлăхĕнчи çĕр лаптăкне парса должноç полномочийĕсен картинчен тухнине тăрă шыв çине кăларнă. Тĕрĕслев çирĕплетнĕ тăрăх – Çĕмĕрле хула администрацийĕн пуçлăхĕ пулнă май Броницын 2011 çулхи авăн уйăхĕнче çĕр лаптăкĕн рынок хакне палăртмасăрах ăна уйрăм çын харпăрлăхне парасси çинчен калакан йышăну кăларса саккуна пăснă. 1,8 пин тăваткал метра яхăн лаптăк патшалăх харпăрлăхĕнче пулнă, ăна мэри тытса тăнă. Çĕре автозаправка станцийĕ тума панă – чăннинчен чылай пĕчĕкрех хакпа. Кадастр хакĕ 3,7 млн яхăн тенкĕ пулнă, чăннипе вара 552 пине яхăн тенкĕллех панă.

Прокурор тĕрĕслевĕн материалĕсене тĕпе хурса утă уйăхĕн 31-мĕшĕнче Следстви комитечĕн Çĕмĕрлери пайĕ хула администрацийĕн экспуçлăхĕ тĕлĕшпе Уголовлă кодексăн 286 статйин 1-мĕш пайĕпе уголовлă ĕç пуçарнă.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

Тупма пулăшăр



Чăваш Республикин Шалти ĕçсен министерстви Шупашкар хулинче 1954 çулта çуралнă Владимир Петрович Алексеева шырать. Утă уйăхĕн 19-мĕшĕнче вăл Мари Республикинчи Звенигово хулинчи Вершинин урамĕнчи 64-мĕш çуртран çŷп-çап тăкма тухнă, çакăн хыççăн ун çинчен нимĕнле хыпар та çук. Владимир Петрович Шупашкарта Некрасов урамĕнче пурăннă.

Паллисем: 60 çулта, хытăнкарах кĕлеткеллĕ, 165 см çŷллĕш, хура çŷçлĕ, кăштах кăвакарма пуçланă, куçĕ хăмăр тĕслĕ. Капюшонлă кăвак тĕслĕ «толстовка», сăрă джинсăлавар, хура пушмак тăхăннă.

Çухалнă çын çинчен кам та пулин пĕлсен Владимир Петрович тăванĕсем патне 89176513084 е 02 телефонпа шăнкăравламалла. Тупма пулăшакана хавхалантараççĕ.

ЧР ШĔМ пресс-служби

Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru

Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пŷлĕм

РЕКЛАМА

ПĔЛТЕРŶ
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

ПРОДАЮ

4.Пластиковые ОКНА. Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка - бесплатно. Т. 89875766562.

8.Гравмассу, песок, щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 89051990122.

12.Профнастил, металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Т. 444433.

19.Гравмассу, песок, **керамзит, бой** кирпича. Т. 89033225766.

61.Блоки керамзитобетонные от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

75. Дымоходные трубы из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

79.Прицеп мотоблока, **мини-трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

172.Гравмассу, керамблок, **песок,** щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

178.Гравмассу, песок, цемент. Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 89278497674.

323.Песок карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, **бетон,** раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

341.Гравмассу, песок, щебень. Доставка. Т. 89030666630.

372.Песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, **керамзит.** Доставка. Т.: 8-960-308-08-54, 8-917-066-04-80.

450.КЕРАМБЛОКИ пропаренные, вибропрессованные – **недорого. Доставка.** Т. 8-917-677-68-46.

464.Косилки, грабли, окучники, пресс-подборщики, **картофелекопалки.** Доставка. Т. 8-937-956-00-54.

518.Гравмассу, щебень, песок речной, карьерный; **чернозём,** глину. Д-ка. Т. 89520269954.

563.Картофелеуборочный комбайн DR 1500 GRIMME 2-рядный, 2003 г. в., бункер 4,5 тн. после сервиса, вложение не требует; в хорошем состоянии – 1 миллион 50 тыс. руб. или **меняю на зерно.** Т.: 8-903-379-22-44, 8-905-344-01-81.

570.Щебень, песок, гравмассу, навоз, торф, чернозем. **Доставка.** Услуги самосвала – 15 тн. Т. 8-987-669-29-41.

Саламлатпăр

Йĕпреç районĕнчи Эйпеç ялĕнче çуралса ŷснĕ ***Акулина Тихоновна ЖУРАВЛЕВĂНА*** *90 çул тултарнă ятпа ачисем, мăнукĕсем, тăванĕсем саламлаççĕ, çирĕп сывлăхлă пулма сунаççĕ.*

ОАО «ГАЗПРОМ»

ФИЛИАЛЫ ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород»

ЧЕБОКСАРСКОЕ И ЗАВОЛЖСКОЕ ЛИНЕЙНЫЕ ПРОИЗВОДСТВЕННЫЕ УПРАВЛЕНИЯ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ

УВЕДОМЛЕНИЕ

ЧЕБОКСАРСКОЕ И ЗАВОЛЖСКОЕ ЛИНЕЙНЫЕ ПРОИЗВОДСТВЕННЫЕ УПРАВЛЕНИЯ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ УВЕДОМЛЯЮТ юридических и физических лиц, владеющих и обрабатывающих землю или (и) производящих работы на территории Чувашской Республики, что на территории Чувашской Республики находятся магистральные газопроводы (МГ), газопроводы-отводы (-перемычки, -лупинги, -резервные нитки, -шлейфы) и другие подземные объекты МГ (далее по тексту - газопроводы), эксплуатируемые под рабочим давлением до 75 кг/см². Глубина залегания газопроводов (от верхней поверхности трубопроводов) составляет не менее 0,8 метров.

«Правилами охраны магистральных трубопроводов», утв. ГГТН РФ 24.04.92 г. (внесены дополнения 23.11.94 г.), в целях обеспечения нормальных условий эксплуатации и исключения возможности повреждения газопроводов устанавливаются охранные зоны по 25 м (по суше) и 100 м (для подводных переходов) в обе стороны от оси любого газопровода.

Минимальное расстояние от газопроводов до объектов различного назначения установлено на основании СНиП 2.05.06-85* и для находящихся на территории Чувашской Республики газопроводов составляет от 100 метров до 350 метров.

В охранных зонах газопроводов запрещается производить всякого рода действия, могущие нарушить нормальную эксплуатацию трубопроводов, либо привести к их повреждению, в частности:

а) перемещать, засыпать и ломать опознавательные и сигнальные знаки, контрольно-измерительные пункты;

б) открывать люки, калитки и двери необслуживаемых усилительных пунктов кабельной связи, ограждений узлов линейной арматуры, станций катодной и дренажной защиты, линейных и смотровых колодцев и других линейных устройств, открывать и закрывать краны и задвижки, отключать или включать средства связи, энергоснабжения и телемеханики трубопроводов;

в) устраивать всякого рода свалки, выливать растворы кислот, солей и щелочей;

г) разрушать берегоукрепительные сооружения, водопропускные устройства, земляные и иные сооружения (устройства), предохраняющие трубопроводы от разрушения, а прилегающую территорию и окружающую местность - от аварийного разлива транспортируемой продукции;

д) бросать якоря, проходить с отданными якорями, цепями, лотами, волокушами и тралами, производить дноуглубительные и землечерпальные работы;

е) разводить огонь и размещать какие-либо открытые или закрытые источники огня.

В охранных зонах трубопроводов без письменного разрешения предприятий трубопроводного транспорта запрещается:

а) высаживать деревья и кустарники всех видов, складировать корма, удобрения, материалы, сено и солому, располагать коновязи, содержать скот, выделять рыбопромысловые участки, производить добычу рыбы, а также водных животных и растений, устраивать водопои, производить колку и заготовку льда;

б) сооружать проезды и переезды через трассы трубопроводов, устраивать стоянки автомобильного транспорта, тракторов и механизмов, размещать сады и огороды;

в) производить мелиоративные земляные работы, сооружать оросительные и осушительные системы;

г) производить всякого рода открытые и подземные, горные, строительные, монтажные и взрывные работы, планировку грунта.

Письменное разрешение на производство взрывных работ в охранных зонах трубопроводов выдается только после представления предприятием, производящим эти работы, соответствующих материалов, предусмотренных действующими Едиными правилами безопасности при взрывных работах;

д) производить геологосъемочные, геолого - разведочные, поисковые, геодезические и другие изыскательские работы, связанные с устройством скважин, шурфов и взятием проб грунта (кроме почвенных образцов).

Владельцы земельных участков не могут строить какие бы то ни было здания, строения, сооружения в пределах установленных минимальных расстояний до объектов системы газоснабжения; такие владельцы не имеют права чинить препятствия организации - собственнику системы газоснабжения или уполномоченной ею организации в выполнении ими работ по обслуживанию и ремонту объектов системы газоснабжения, ликвидации последствий возникших на них аварий, катастроф. (ФЗ от 31.03.1999 г. № 69-ФЗ «О газоснабжении в РФ»).

Органы исполнительной власти и должностные лица, граждане, виновные в нарушении правил охраны магистральных трубопроводов, газораспределительных сетей и других объектов систем газоснабжения, строительстве зданий, строений и сооружений без соблюдения безопасных расстояний до объектов систем газоснабжения или в умышленном блокировании либо повреждении, иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действиях, несут ответственность в соответствии с законодательством Российской Федерации.

Здания, строения и сооружения, построенные ближе установленных строительными нормами и правилами минимальных расстояний до объектов систем газоснабжения, подлежат сносу за счёт средств лиц допустивших нарушения.

Материальный ущерб, нанесённый организации – собственнику системы газоснабжения в результате умышленного её блокирования или повреждения либо иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действий, возмещается в установленном порядке виновными лицами или принявшими противоправные решения лицами.

При рассмотрении соответствующими органами ходатайства о предоставлении земельных участков для указанных целей место расположения объектов строительства должно предварительно согласоваться с ЛПУМГ. Перед началом работ необходимо получить письменное разрешение Чебоксарского ЛПУМГ и (или) Заволжское ЛПУМГ на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода. Производство работ без разрешения или по разрешению, срок действия которого истек, ЗАПРЕЩАЕТСЯ.

Получив разрешение на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода, необходимо до начала работ вызвать представителя Чебоксарского ЛПУМГ и (или) Заволжское ЛПУМГ для установления точного местонахождения трубопровода, определения его технического состояния и взаиморасположения с сооружениями проектируемого (строящегося) объекта. В процессе строительства необходимо письменно за 5 суток до начала уведомить Чебоксарское ЛПУМГ и (или) Заволжское ЛПУМГ о времени производства тех этапов работ, специально указанных в выданном разрешении при которых необходимо присутствие представителей Чебоксарского ЛПУМГ и (или) Заволжского ЛПУМГ.

По всем вопросам, относительно производства земляных работ в зонах газопроводов, обращаться по адресу:

429620, с.Красноармейское, Филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» – Заволжское ЛПУМГ, тел.: 8 (83530) 2-23-90, 2-22-50 или

428027, г.Чебоксары, пр. И.Яковлева, 25, Филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» – Чебоксарское ЛПУМГ, тел.: 8 (8352) 30-54-09, 30-54-22.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:000000:3802 площадью 679955 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Тойсинское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел.: (83532)6-14-26.

чăваш халăх хаçачĕ

ХЫПАР

Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

Федерацин сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ

"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:

М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/

Дежурнăй редактор А.В.СЕРГЕЕВА

Редакци издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев просекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".

ТЕЛЕФОНСЕМ

Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренŷ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ: hypar2008@rambler.ru
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерŷсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ

Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРŶСЕНЕ 316-мĕш пŷлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерŷсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тŷлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшŷллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Номере 18.08.2014 алă пуснă.

Пичете графикăпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 7411. Заказ 3076.